54-92
53-160

В. ДОЛГОВ

Пирĕн сăвăх Юлташ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ • 1953

В. ДОЛГОВ

Пирĕн сывăх Юлташ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШГОСИЗДАТ ◆ 1953

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
22 октября 1983 г.
№ 204

Ӳкерчӗкӗсем *П. В. Сизов* художникӑн

КИЛХУШШИНЧЕ

1.

Уçă чӳречe умĕнче Виссар кĕнеке вуласа ларать, хушăран килкартинелле пăхса илет. Унта ача-пăча вылять. Хурт пек сĕрлет. Тем пек тимлĕн вуласан та ачасен çинçе сасси Виссар хăлхине пырса кĕрет:

— Пĕрре—пĕрел. Иккĕ—икел. Виççĕ—виçел. Тăваттă—тăваткал. Пиллĕк—пилеш. Улттă—улма. Çиччĕ—çилме. Саккăр—салма. Тăххăр—тăрна. Вуннă—ятне тупнă.

— Пĕтрĕ!

— Атьăр, каллех çĕнĕрен выляр!..

Выляннă, йăсланнă хушăра ача-пăча ушкăнĕнче тахăшĕ шар-и-и! — макăрса ячĕ.

Виссар хăйĕн ултă çулхи шăллĕн сассине уйăрса илчĕ те: „Кирука мĕн пулчĕ-ши?“ тесе чӳречерен пăхрĕ. Пĕчĕк Кирук тăпра çине кукленсе ларнă та сулахай ури пӳрнисене икĕ аллипе пăчăртаса тытнă. Хăй чăтайми макăрать:

— Урана вут чулĕ çурчĕ... ыратать... Тӳсме çук.

Виссар кĕнекине сĕтел çине хучĕ те, васкасах килхушшине, ачасем патне тухса чупрĕ. Пуçĕнче пĕр шухăш: „Кирука хăвăртрах пулăшас!“

2.

Çуллахи ăшă кунсенче Виссар та шăллĕ пекех кĕпе вĕççĕн, çара уран çӳрет. Амăшĕ хăш чухне ачисене:

— Асăрханса çӳрĕр, урăра шăрпăк ан кĕтĕр,— тесе асăрхаттарать.

— Эпир пĕчĕккĕ-и-мĕн... — хирĕçлеççĕ ачисем.

— Пушмак тăхăнăр.

— Никам та пушмакпа çӳремест. Ашă чухне çарран лайăхрах... Урасем канаççĕ.

Хĕвел хĕртнĕçемĕн хĕртет. Чăнах та, мĕнле аван çуллахи ăшă кун! Хулсем, мăйсем, питсем саралса каяççĕ, пăхăр тĕслĕ курăнса тăраççĕ. Куçсем çеç шуррăн курăнаççĕ. Пушмаксем килте выртаççĕ. Вĕсене пачах та тăхăнас килмест, — мансах каятăн.

Виссар хăйĕн шăллĕ патне кăшт çеç чупса çитеймерĕ. Вăл кĕтмен çĕртен пĕр урипе темле çивĕч япала çине пусрĕ те ыратнипе çавăнтах сулăнса кайрĕ. Вунă çулхи Виссар та Кирук пекех чарăнса ларчĕ.

„Урана çĕçĕ касрĕ... Кам çĕçĕсем пăрахса çӳрет-ши?“ — тенĕ шухăш пырса кĕчĕ унăн пуçне.

3.

Ачасем выляма чарăнчĕç. Вĕсен хавасла вăйăн пĕтмесĕрех татăлчĕ.

Кирукпа Виссар асăрхамасăр кĕленче катăкĕ çине пуснă-мĕн. Иккĕшин те урисенчен юн юхать. Ачасем, суранĕсем ыратнипе, иккĕшĕ те хĕремесленсе кайнă. Кирук пичĕ çине хĕрлĕ-шурă пăнчăсем тухнă. Куçĕсем шывланнă. Кĕлетки йывăр ĕç тунă пек тарланă.

Пиллĕкмĕш класра вĕренекен хĕрача — пионерка Надя, çавăнтах, хăйсен хваттерĕнчен иодпа бинт тупса тухрĕ. Вăл шап-шурă бинтне кăшт туртса татрĕ те Кирук суранне иодпа çиелтен хуллен сĕрчĕ. Унтан бинтпа меллĕн çыхрĕ. Çыххине туртса салтмалла турĕ.

Надя Виссарăн суранне те бинтпа чĕркесе тирпейлĕн çыхрĕ.

„Санитаркăсем çавăн пек çыхаççĕ“,—шухăшларĕ хăй.

Виссарăн ури ытлах ыратмасть пулмалла. Кăштах вăхăт иртсен, вăл ура çине тăчĕ. Кирук патне пычĕ. Вара иккĕшĕ, уксахласа, урасăр мулкачсем пек сиккелесе, килхушшинчи пĕрене çине кайса ларчĕç. Кирук куçĕнчен пăрça пек куççуль юхаюха анать. Анчах хăй çапах та сассине кăлармасть, нăйкăшмасть.

„Атте вăрçăра амансан пĕрре те нăйкăшман, тет. Паçăр пустуях макăртăм“, — шухăшлать пĕчĕк Кирук. Хăй кантăк катăкĕсем пăрахса çурекенне айăпласа ятлать:

— Урăх çĕре пăрахмалла мар-ши ăна?..

4.

Ирхине ăшă çумăр çунă-мĕн. Санюк инке нӳхрепе кайнă. Ури шунă та, инке кăшт çеç ӳкмен... Ура шунипе сĕт чӳлмекĕ алăран вĕçерĕннĕ, чул çине ӳкнĕ те чăлпар-р! ванса кайнă.

— Ах, атьсемĕр, ах, ваçка! — тенĕ те Санюк инке çынсем куриччен хăйсен хваттерне хăвăрт кĕрсе кайнă.

Инке чӳлмек ванчăкĕсене пухса аяккалла пăрахас вырăнне урипе салатса хăварнă. Кăнтăрла, хĕвел çутинче, чӳлмек ванчăкĕсем унта та кунта симĕссĕн-кăваккăн курăнса выртнă. Ăна Санюк инке хăй те чӳречерен курнă, анчах тухса пухман.

— Эпĕ, Кирука пулăшас тесе, кĕнеке вулама пăрахса тухрăм. Хам та урана кастартăм, — терĕ Виссар хăйĕн юлташĕсене.

— Санюк инке çинчен коменданта каласа кăтартмалла. Мĕншĕн вăл кантăк чӳлмек катăкĕсене килхушшине пăрахса хăварать? Ачасене те хĕрхенмест вĕт! — каласа хучĕ тин çеç ушкăна пырса хутшăннă пионер, улттăмĕш класс ачи — Егор Узяков.

— Ман шутпа, — терĕ Надя, акă мĕн тумалла: пирĕн çуртра вунă хваттер, кашнинчех ача-пăча пур. Атьăр, халех ачасене чĕнсе тухар та, килхушшинчи кантăк, савăт-сапа ванчăкĕсене, тимĕр татăкĕсене пухма тытăнар.

— Утма та, хамăра выляма та яка пултăр, — тинех хаваслансa кайрĕ пĕчĕк Кирук.

— Санюк инке те такăнса ӳкмĕ, — кулса каларĕ Виссар.

— Тĕрĕс! — килĕшрĕç ыттисем.

Надя сĕнĕвне пурте хапăл турĕç.

Килхушшинче часах вунă ача ытла пухăнчĕ.

Хĕрӳ ĕç пуçланса кайрĕ. Пурте тăрăшса ĕçлерĕç. Часах пысăк купа çитĕнсе ларчĕ. Унта кантăк катăкĕ, çĕмрĕк бутылкăсем, çурăк стакансем, чӳлмек ванчăкĕсем...

— Халĕ мĕн тăвăпăр? — ыйтрĕ ачасенчен сарă çӳçлĕ „санитарка".

Пурте Егор çине пăхса илчĕç. Вăл кунта пуринчен те аслăраххи. Çавăнпа та ачасем асли мĕн каласса кĕтме тытăнчĕç.

Егор кăшт тăхтарĕ те Кирук еннелле пăхрĕ.

— Аманнă салтак мĕн калĕ, — терĕ хăй.

— Эпĕ пĕлетĕп, — илтĕнчĕ Кирук сасси.

Кирук ушкăн патне уксахласа пычĕ те:

— Атьăр ку киревсĕрсене урама кăларса перер, — терĕ.

— Çук, урама кăларса пеме юрамасть, — чарчĕ ăна Надя.

— Мĕншĕн юрамасть? — ыйтрĕ ку таранччен шарламасăр тăнă Борис.

— Урамра хăвăн урунах касать.

— Ну, эппин Атăла кайса пăрахар.

— А шыва кĕрес пулсан?

— Каллех урана касать...—ответлерĕ Виссар.

— Никам урине те ан кастăр тесен, тарăн шăтăк алтар та, вĕсене çĕр айне пытарар,—терĕ Узяков.

— Эпĕ те çавăн пек каласшăнччĕ, — тесе хучĕ Надя. Унтан каллех сасăсем илтĕнчĕç:

— Пытарас, пытарас...

— Тĕрĕс! Тĕрĕс!..

Егор Узяков кĕреçепе витре илсе тухрĕ. Ачасем вара кантăк катăкĕсене, кĕленче ванчăкĕсене витрене тултарчĕç те тип çырма хĕррине илсе кайрĕç. Унта вĕсем ватă йăмра айне шăтăк алтрĕç, пĕтĕм ăпăр-тапăра çĕр айне пытарса хăварчĕç.

Ачасем шавласа, савăнса таврăнчĕç. Килхушшинче вара каллех вăйă пуçланчĕ:

— Пĕрре — пĕрел...

— Иккĕ — икел...

1950.



ПИРЁН ÇЫВĂХ ЮЛТАШ

Миша Карпов станцăри шкулта вĕренет. Вĕсен тăваттăмĕш класĕнче юлашки урок пĕр сехетре пĕтет. Икĕ сехет тĕлне Миша хăйсен килне — вăрман хуралçи çуртне çитет. Хăш чухне вăл çул çинче ашшĕне тĕл пулать те, вĕсем вара шакăлтатса калаçса, киле иккĕн пырса кĕреççĕ.

Паян Миша пĕчченех тавраňать.

Мишăсен пŭрчĕ чугун çул хĕрринче ларать. Станципе вĕсен килĕ хушшинче хитре вăрман ŭсет. Мĕнле илемлĕ унта, мĕн тĕрлĕ тĕс унта. Пăхсан, итлесен — кашни çыннăн чунĕ савăнать.

Халĕ кĕркунне. Хурăн çулçисем саралнă. Кĕрхи ăшă çил вĕрсен, вĕсем ылтăн тенкĕсем пек силленсе илеççĕ. Çил вăйлăрах хумхатсан, кăтра хурăнсем

çинчен çулçă хыççăн çулçă ўкет. Миша вара вĕсем хыççăн савăнса чупать, хулленех хăйсен килĕ патне çывхарса пырать.

Ăвăспа пилеш çулçисем те хĕрелсе кайнă. Çирĕксем çеç хăйсен симĕс çулçисене вăраххăн вылятса лараççĕ.

Сарă, хĕрлĕ çулçăсене Миша ытараймасть. Унăн кĕнеки ăшĕнче халĕ юман, çăка, хурăн, вĕрене, шĕшкĕ çулçисем пур. Кашниех паха, кашнинченех хăйне евĕрлĕ ырă шăршă кĕрет.

— Ку хитре çулçăсене эпĕ хĕлле юлташсене кăтартатăп, çуркуннечченех усратăп, — тет вăл хăйне хăй. Пĕлтĕр те вăл çавăн пек тунăччĕ.

Миша Карпов чугун çул хĕрринчи такăр сукмакпа савăнса пырать. Хăш чухне вăрмана кĕрсе тухать. Лини çинче чарăнса тăрать. Кĕрхи çанталăк çуллахи пекех ăшă. Ун пек çанталăк сентябрь уйăхĕнче çулленех тенĕ пек пулать. „Ватă ăшши“ теççĕ ăна чăвашсем. Ăшă кунсенче çарамасах çўретĕн. Миша та акă шкула кĕпе вĕççĕнех кайнă. Мăйĕнче хĕрлĕ галстук. Ачан ўт-тирĕ çу каçиччен пиçсе илемленнĕ. Пичĕ-куçĕ, мăйĕ тап-таса. Куçĕсем çĕмĕрт пек. Пуçĕнче хура пустав кепка.

Вăрман йывăçĕсем çинчен вĕл-вĕл вĕçсе анакан çулçăсем хыççăн чупнăран Мишăна пушшех те ăшă. Унăн питçăмартисем кăштах хĕрелнĕ. Панулми пек туйăнаççĕ вĕсем.

Пĕчĕк кĕпер урлă каçрĕ те Миша Карпов тап! тăчĕ. Тĕлĕнсех кайрĕ: чугун çул сылтăмалла пăрăннă çĕрте рельс татăлнă... Куçпа виçсе пăхрĕ те рельс татăлнă хушă 15 сантиметр пулать. Çакна курсан, Миша хумханма пуçларĕ. Чĕри хытăрах тапма тытăнчĕ. Çамки çине тар пĕрчисем тапса тухрĕç, шăрçаланса юхса анчĕç.

„Мĕн тумалла? Кама пĕлтермелле? Мĕнле пĕлтермелле?..“ — Çак шухăшсем пĕр самант хушшинче пионер пуçне пырса кĕчĕç, ыраттарма пуçларĕç. Икĕ сехет тĕлнелле Мускав поезчĕ иртмеллине те Миша аса илчĕ. Вăл акă часах килмелле, часах...

„Мĕн тăвас?..“ Шухăшсем пуçтарăнса та çитеймерĕç — поезд кăшкăрни илтĕнсе кайрĕ. Вăрман чĕтренĕ пек туйăнчĕ. Рельссем кисренеççĕ пек. Çил те вăйлăраххăн вĕрсе илчĕ. Пĕрре сивĕ пек, тепре ăшă пек туйăнчĕ ачана...

„Мĕн тăвас?..“ каллех хăйĕнчен хăй ыйтрĕ Миша. Ответне пама ĕлкĕреймерĕ — малта, йывăçсем хушшинчен, поезд тĕтĕмĕ çĕклемĕн-çĕклемĕн çÿлелле çĕкленчĕ. Капан пек курăнчĕ. Анчах Миша хăраса тăмарĕ: çулçăсем хуракан кĕнекине сумкине хăвăрт чикрĕ те малалла чупса кайрĕ.

„Мĕн пулсан та поезда чармалла, ăна рельс татăлнă çĕре çитермелле мар, çавăнпа та маларах, маларах... Поезда хирĕç каймалла...“ — тупăнчĕ хайхи ответ.

Карпов вĕçнĕ пек пырать. Чупнă çĕртех мăйĕнчи галстукне салтрĕ. Çав вăхăтрах хĕрлĕ галстук сывлăшра ялкăшрĕ, çулăм пек курăнчĕ.

Миша вĕçтерекен галстука машинист курчĕ пулас, — часах сигнал сасси илтĕнчĕ. Унтан вара поезд, хăйĕн чуппине вăрахлатса, майĕпен шуса пырса, Миша патне çитичченех чарăнчĕ. Машиниста вăл вунпĕр çулхи ученик пек мар, мăн çын пек курăннă. Чăн та, Миша пионера çак самантра рабочи, колхозник, бригадир, инженер... теме пулнă. Вăл пысăк пулнă,—пысăкран та пысăк ĕç тунă.

Миша Карпов поезд патне патваррăн утса пычĕ. Ăна хирĕç машинист тухрĕ. Пионер çул çинче мĕн

курнине машиниста каласа пачĕ, ăна татăк рельс патне илсе кайрĕ.

Çакăн хыççăн станцирен рабочисем килчĕç те рельса часах юсаса сыпрĕç.

— Герой!—терĕ машинист, Мишăн паттăр ĕçне мухтаса. Унтан вăл пионера ыталаса виçĕ хутчен чуптурĕ. Миша хăйĕн галстукне юсаса çыхрĕ те, машинист умне салтак пек тăрса, сылтăм аллине çĕклерĕ:

— Яланах хатĕр! Тăван çĕршывшăн тăма хатĕр, савнă пиччем!—терĕ.

Машинистпа пионерăн сасси кĕрхи вăрманта нумайччен янăраса тăчĕ.

Тепĕр кунхине Миша Карповăн ырă ĕçне пĕтĕм шкул пĕлчĕ, станцири çынсем те кашниех пĕлчĕç.

— Кам ачи вăл?—ыйтрĕ станци начальникĕ.

— Пирĕн вăрман хуралçи ачи, Никонор Карпăч ывăлĕ,—тесе ответлерĕç Миша ашшĕпе пĕрле ĕçлекенсем, хăйсем темшĕн *пирĕн* сăмаха хытăрах каларĕç.

— Пирĕн çывăх юлташ,—хавасланса пĕлтерчĕç Мишăпа пĕр партăра ларакан Мирунпа Якку.

— Пирĕн дружинăри пионер,—савăнса каларĕç Мишăпа пĕр класра вĕренекенсем.

— Пирĕн шкулта вĕренекен ученик, — терĕç станцири виççĕмĕш шкулăн учителĕсем.

Миша Карпов çинчен станцири çынсем, заводсенче, тĕрлĕ учрежденисенче ĕçлекенсем, шкулсенче вĕренекенсем пурте ырă сăмах каларĕç:

— *Пирĕн...*

Миша ĕçĕ пирки ятарласах пионерсен дружини пухăнсан, шкул директорĕ вожатăйран сăмах ыйтса илчĕ те:

— Машинист çырса хăварнипе станци начальникĕ пирĕн Миша валли Çул-йĕр министерствинчен преми ыйтса илнĕ. Миша Карпов, вĕренӳ çулĕ пĕтсен, çитес çулла, вунă кунлăха Мускава экскурсие каять,—терĕ.

1950.

ЫТАРАЙМИ ТЁЛЁК

1.

Йăлăмри вăрман тёксёмленчё те, Атăл çинче кăвак тётре курăнчё. Часах тёттёмленсе каç пулма тытăнчё. Унта та кунта электричество çути курăнса кайрё.

Сантăр килте пёчченех. Унăн ашшёпе амăшё тăхăр сехетре çеç килмелле. Иккёшё те шкула, вёренекен ачасен ашшё-амăшёсен пухăвне, кайнă. Сантăр вёсене кётнипе тунсăхласа, шкапри кёнекесене иле-иле пăхрё. Унтан вăл „Огонёк“ журнал илчё. Мён тёслё картина çук-ши унта? Акă виçё вырăс паттăрё, ыраш уйё, чăрăш вăрманё, çуркунне...

Журналăн пĕр номерĕнчен çĕнĕ картина сиксе тухрĕ. „Пирĕн çĕршыв ирĕ“ тесе çырнă аяла. Картина çине И. В. Сталин сăнне ўкернĕ.

Çамрăк ача, Сантăр, пĕр сехет хушши пăхса ларчĕ ку картинăна. Унтан вăл ăна стена çине çапса хучĕ. Аяккарах тăрса пăхрĕ.

Çак вăхăтра алăк патĕнче звонок сасси илтĕнсе кайрĕ.

— Атте, анне!—тесе чупрĕ Сантăр.

Шкулти пуху шăпах икĕ сехет пынă. Унта учительница Зоя Михайловна виççĕмĕш класри ачасем кăçал мĕнле вĕренни çинчен каласа пĕлтернĕ. Учительница сăмахĕ пухăва пынă ашшĕ-амăшĕсене савăнтарнă.

— Вĕренӳ çулĕ лайăх иртрĕ. Ачасем тăрăшса, тимлĕ вĕренчĕç. Пурте тăваттăмĕш класа куçрĕç. Ачасемшĕн хĕпĕртетĕп, чĕрем савăнса сикет.

Шкул ачисен ашшĕ-амăшĕсен кăмăлĕсем, Зоя Михайловна сăмахĕсене итленипе, çĕкленсе тăчĕç. Сантăр амăшĕ, ывăлĕн вĕренӳ паллисене пĕлсен, кăштах хурланма пăхрĕ.

— Хурланмалли çук, — ăнлантарчĕ учительница, — Александр Кузьминăн пуринпе те „пиллĕк“, пĕр предметпа çеç „тăваттă“. Тĕлĕнмелле пултаруллă ача. Хытă тăрăшать, ăша хывса вĕренет.

Сантăр амăшĕн пăшăрханăвĕ часах иртсе кайрĕ. Чун-чĕри ачишĕн хавасланчĕ.

— Ăша хывать пулсан, килес çул лайăхрах вĕренĕ, — терĕ Сантăр ашшĕ.

— Хамăр та ытларах пулăшăпăр, — хушса хучĕ амăшĕ.

Пуху хыççăн ачасен ашшĕ-амăшĕсем Зоя Михайловнăна пурте тавтурĕç, аллине ăшă кăмăлпа пăчăртарĕç, ырлăхпа сывлăх сунчĕç.

— Ачасене лайăх вĕрентсе тăваттăмĕш класа куçарнăшăн пысăк тав сире, Зоя Михайловна!

— Çулла нумайрах вăй пухăр!

— Пирĕн пата чей ĕçме пырăр!

— Калаçса ларма кĕрсе тухăр!

— Лайăх канăр, Зоя Михайловна!

... Сантăр хăй юратнă картина патне пычĕ те ашшĕ-амăшĕнчен:

— Сире ку картина килĕшет-и? — тесе ыйтрĕ.

— Ах, хитре-çке ку картина, — терĕ амăшĕ ачине ырласа.

— Кăмăллă картина. Çĕнĕ художник Шурпин тунă, — ăнлантарчĕ ашшĕ.

Сантăр амăшĕ çывăрмалли пӳлĕме кĕрсе кайрĕ. Ачине ашшĕ унăн виççĕмĕш класри ăнăçăвĕсем çинчен каласа пачĕ:

— Лайăх вĕрентĕн, ывăлăм. Пур предметпа та лайăх паллăсем. Анчах „пиллĕксем“ хушшинче пĕр „тăваттă“ пур.

Ашшĕ сăмахĕсене итлесе ларнă чухне ачи çав пĕр „тăваттăшăн“ кăштах именсе вăтанчĕ. Пуçне усрĕ. Ашшĕ шухăша кайрĕ.

„Эпир те пĕчĕккĕ пулнă. Анчах урăх саманара вĕреннĕ. Никам та пирĕнпе интересленмен. Вĕренӳ паллисем мĕнле пулнине хамăр та пĕлмен. Халĕ эпир ывăлăмăрăн кашни утăмне пĕлсе тăратпăр. Шкул та, çемье те пĕр ĕçех тăвать. Çамрăк ăрăва телейлĕ тăвас тесе, пĕтĕм çĕршыв тăрăшать“.

— Атте, мĕн çинчен шухăшлатăн? — тесе ыйтрĕ ачи, пурне те часах сисекенскер.

— Эпĕ шухăшланине ăçтан пĕлтĕн? — тĕлĕнсе ыйтрĕ ашшĕ.

— Эпĕ вăрттăн пăхса лартăм. Ман çинчен шу-

хăшланине сисрĕм. Мĕншĕн пур предметпа та „пиллĕк“ мар-ши тетĕн...

Ашшĕ кулас мар çĕртенех кулса ячĕ. Унтан вăл Шурпин картини патне пычĕ те:

— Ашшĕ-амăшĕсем ĕмĕрех çавăн пек шухăшлаççĕ. Сирĕн çинчен пĕтĕм халăх шухăшлать, сирĕншĕн тăрăшать, çамрăк ăру лайăх ўстĕр те лайăх вĕрентĕр, тет,—терĕ.

— Эсир çак мĕн хытă пуплетĕр? — ыйтрĕ Сантăр амăшĕ шалти пўлĕмрен тухнă-тухманах.

— Зоя Михайловна пухура пĕлтернĕ паллăсене Сантăра каласа патăм,—терĕ ашшĕ.

— Тăваттăмĕш класра тата та лайăхрах вĕренме тăрăшăп, — пулчĕ ачин отвечĕ.

2.

Сантăр ашшĕпе амăшĕ нумайччен ларчĕç. Пĕри çĕнĕ хаçатсемпе журналсем вуларĕ. Тепри, амăшĕ, ĕнер вулама тытăннă „Пĕрре çуркунне...“ кĕнекене вуласа ларчĕ.

Сантăр, вунă сехетре выртнăскер, ăшă ыйхăпа çывăрать. Вăхăтран-вăхăта çывăрнă çĕртех кăмăллăн кулса илет. Телейлĕ пичĕ çине пăхсан, вăл ырă тĕлĕк курнине туятăн.

Тĕлĕкĕ чăнах та паха мĕн:

... Çуллахи çутă ир. Хĕвел тухса çитмен-ха. Анчах унăн сарă тĕсĕ пĕтĕм пĕлĕте çапнă, тĕнчене сарăлнă.

Вĕçĕ-хĕррисĕр уйсем, улăхсем, кўлĕсем, юханшывсем.

Инçетре-инçетре ем-ешĕл вăрман.

Пур çĕрте те кайăк сасси, юрă çемми. Курăк-чечек шăрши.

Уйсенче машинăсем ĕçлеççĕ. Вĕсене совет çыннисем тытса пыраççĕ. Пурте уяври пек тумланнă.

Кăшт леререхре—заводсемпе фабрикăсем. Вĕсем патне рабочисем васкаççĕ. Юрă юрлаççĕ.

Çатма пек çулсем тăрăх автобуссем ирех чупаççĕ. Çулсем айккинче çамрăк çăкасемпе хурăнсем ўсеççĕ. Йăваш çил вĕрнипе йывăç тăррисем хуллен-хуллен хумханса илеççĕ.

Ылтăн тĕслĕ ир çутăлсах пырать. Ирхи сывлăм кĕмĕшке пек курăнса выртать. Сарă, хĕрлĕ, кăвак чечексем пĕрин хыççăн тепри куçĕсене уçаççĕ.

Таçтан ирех пыл хурчĕ вĕçсе килнĕ. Пыл шыраса чечек çинчен чечек çине вĕçет.

... Çĕршывăн çутă ирне кĕтсе илме илĕм-тилĕмпех Сталин тухнă. Вăл çара пуçăн. Кăвакрах çўçне хыçалалла туранă. Пăхатăн та тўрех куратăн: аслă çулпуçăн пит-куçĕнче Тăван çĕршыв кăмăлĕ, шухăшĕ, савăнăçĕ, ирĕкĕ. Халăх ăна вăй парать, ăс парать.

И. В. Сталин çинче шурă тумтир. Çирĕп аллисене пĕрлештерсе тытнă, сылтăм хулĕ çине çăмăл пальто çакса янă.

— Иосиф Виссарионович, ăçта каятăр? — тесе ыйтаççĕ рабочисемпе хресченсем.

— Атьăр, тăванăмсем, çĕршывăн ирне кĕтсе илер, — тет вăл ăшă кăмăлпа.

... Хĕвелĕн ылтăн çути ирхи тарăн пĕлĕтре, Совет çĕршывĕнче тулсах пырать.

Çĕршыв тăрăх пыракан Сталина Шупашкар ачи те таçтанах курчĕ, ун патне çывхарсах пычĕ. Александр Кузьмина Сталин палларĕ те:

— Сывă-и, Сантăр! — терĕ.

— Сывă! Лайăх пурăнатпăр!

Сантăр чăтса тăраймарĕ, тĕлĕннипе:

— Эсир мана ăçтан пĕлетĕр? — тесе ыйтрĕ.

— Эпё сирён шкулăрти ачасене пурне те пёлетёп. Эсё вёренекен шкулăн директорё Варбеев вёт-ха. Сирён учительница — Зоя Михайловна. Вожатăй — Миша Караваев. Вёсем кашни кунах сирён ёçёрсем çинчен пире каласа параççё. Яланах халăх пулăшать пире.

Сантăр хăйён вёренӳ паллисене аса илчё те, пёр „тăваттăшăн“ вăтанма пуçларё.

— Ан вăтан, çамрăк юлташăм. Сана панă паллăсем эсё тăрăшса вёренни çинченех калаççё. Анчах пур предметпа та „пиллёк“ илсе пырсан, хăвăр аçăрпа аннёршён тата пирёншён те савнăçлăрах пулёччё. Эпир сирён кашни тёрёс сăмахăршăн пётём чёререн савăнатпăр. Совет ачисен шкулти ёçёшён, вёсен ашшёсемпе амăшёсен производствăри ёçёсемшён савăнса хёпёртенипе пирён вăй-халăмăр ӳсет, тăван халăхшăн нумайрах ёçлес килет.

И. В. Сталин шурă пиншак кёсйинчен кăранташпа тетрадь кăларчё те, сылтăм аллипе Сантăрăн çурăмне хуллен лăпкаса:

— Ме сана, çамрăк юлташăм, лайăх вёреннёшён! Асăнмалăх! Вăтам шкултан вёренсе тухсан, Мускава вёренме пыр, — терё.

Çав сăмахсене итленё хыççăн:

— Сăмах паратăп, сире лайăхран та лайăх вёренме! — тесе хучё Сантăр.

Сантăр хăй сассипе хăех вăранса кайрё. Унăн сассине ашшёпе амăшё те илтрёç. Сантăр куçне уçса пăхсанах, сётел çинче выртакан „Пирён çёршыв ирё“ картинăна аса илчё, унтан каллех тутлă ыйхăпа çывăрма пуçларё.

Тул çутăлсан, Александр хăйён ытарайми тёлёкне ашшёпе амăшне каласа пачё.

— Сталин каланисене эпĕ нихçан та манас çук,—хавасланчĕ Сантăр.

— Хамăр шкултан лайăх вĕренсе тухсан, Мускава вĕренме кайăн,—савăнтарчĕ ывăлне ашшĕ.

— Мускавах кайăп, эсĕ вĕреннĕ университета кĕрĕп!—тесе ĕмĕт хыврĕ ывăлĕ хăйĕн çамрăк чĕрине.

1950.



КĂРАНТАШ ХАЛАПЕ

1.

Владик виççĕмĕш класра вĕренет. Халĕ вăл сĕтел хушшине ларнă та урок хатĕрлет. Задача кĕнекине пĕрмаях уça-уça хупать, тăрсан-тăрсан хыçалти страницисене пăхса илет. Унтан тетрадь çине çырнă цифрăсене хуратса тăкать.

Ачан пичĕ хĕрелсе кайнă. Çамки çине тар тухнă.

Владик ашшĕ заводра ĕçлет. Хăш чухне вăл каça юлса таврăнать. Владик амăшĕ вара:

— Ма час килмерĕн? Апат тахçанах пĕçертĕм, кĕтсе те ывăнтăм,— тесе ўпкелешет.

Петр Михайлович çакна хирĕç:

— Кружок пулчĕ. Вĕрентĕмĕр,— тет.

— Пĕрмай вĕренетĕр. Пĕчĕк ачасем пек...— тесе хурать Владик амăшĕ.

— Сан шутупа цех начальникĕ тесе вĕренмелле мар-и-мĕн?

— Ун пек каламастăп та... Яшка сивĕнсе кайрĕ-çке.

— Вĕренмелли кун вĕренесех пулать. Вĕренмесен — пурнăçран та юлăн...

— Çапла çав! — тесе килĕшет юлашкинчен Владик амăшĕ.

Халĕ Петр Михайлович килте вĕренет. Ун умĕнче — кĕнекесем, журналсем, хаçатсем. Хулăн тетрадь страницисене пĕтĕмпех çырса тултарнă.

Ашшĕ çине ачи вăрттăн пăхса илет те: „Эсĕ нумай вĕреннĕ, çавăнпа сана задача шутлама çăмăл“, тесе шухăшлать. Çав вăхăтрах тата хăйĕн задачникне уçать те: „Ку задачăна эсĕ те тăваймăн, атте! Сирĕн завод директорĕ те тăваймĕ ăна. Ытла та йывăр задача...“, тесе калама тăрать, анчах калаймасть.

Владик ывăннă: çавăнпа вăл хăйне хăй тарăхса ларать. Ун çине пăхсан: „Задачи вара, задачи— нĕрсĕр йывăр задача...“ темелле.

Мĕн туса ывăннă-ши Владик? Чăнах та çав тери йывăр-ши унăн задачи?..

2.

...Паян Владик шкултан килсенех сумкине хывса пăта çине çакрĕ те:

— Анне, урама тухса кăштах вылям-и?— тесе ыйтрĕ.

— Малтан апат çи... унтан...— амăшĕ калама та ĕлкĕреймерĕ, ача тухса та чупрĕ.

— Тепĕр сехетрен кил, Владик! Килмесен, сан урокна кам тăвĕ?

— Хама-а-ах! — илтĕнчĕ килхушшинчен тухса каякан ача сасси.

Владик малтан çырмари пăр çине анчĕ. Унта вăл Ваççука тĕл пулчĕ. Вара иккĕшĕ завод хыçне, Çутă кӳлĕри пăр çине, кайрĕç. Кунта пăр тата лайăхрах: çатма пек, яп-яка та çап-çутă. Пĕрре шăватăн та урлă каçса каятăн, чарăнма та пĕлместĕн.

Владикпа Ваççук хăш чухне пăр çинче ӳкеççĕ, тепĕр чухне кӳлĕ хĕррине шуса çитеççĕ те юр купи çине тăрăнаççĕ. Хăйсем,— пăхма çук,— йăлтах юрланса пĕтнĕ. Анчах ачасене ним те мар: иккĕшин те пальтисем вĕр-çĕнĕ, çăматтисем питĕ, алсишĕсем ăшă, шуçтупанĕсем* лайăх.

Каçкӳлĕм Çутă кӳлĕ çине тата темиçе ача тухрĕ. Вăйă-кулă пушшех те хĕрсе кайрĕ. Ача-пăча ушкăнĕ-ушкăнĕпе ярăнать, умлăн-хыçлăн вĕçтерет. Пĕри ӳкет, йăванса каять; тепри тăрать... малалла чупать.

Миçук çине Якку пырса çапăнчĕ. Иккĕшĕ те йăванса кайрĕç. Пăр çинче выртаççĕ.

— Миçук, эсĕ задача турăн-и? — ыйтать Якку выртнă çĕртех.

— Тумасăр! Ахалех çакăнта килĕп-и,— тет Миçук, тăма хăтланса.

— Паян панă задача ытла та çăмăл,— илтĕнет теприн сасси.

— Эпĕ, магазина çăкăр илме кайсан, ăна шухăш вĕççĕн шутласа кăлартăм. Отвечĕ — 105,— хутшăнчĕ Мишша, чалăшнă шуçтупанне тӳрлетсе тăраканскер.

— А эпĕ шкултан килнĕ чухнех шутларăм. Киле çитсен тетрадь çине çырса хутăм,— пĕлтерчĕ Толя Арсютов.

---

* *Шуçтупанĕсем* — конькисем.

— Сăвви тата мĕнле? — ыйтрĕ Миçук, пăр çин чен сиксе тăрса.

— Çăмăл сăвă. Пĕрре такăнмасăрах вĕрентĕм,— тавăрчĕ Мишша.

— Çăмăл! — терĕç ыттисем те.

Унтан пурте малалла шуса кайрĕç. Ярăннă майăн вĕсем хайхи сăвва пăхмасăрах каласа пычĕç.

Кам пире, шкула пырсассăн,
Тĕрлĕ ăса вĕрентет?
Кунсерен пире хавассăн
Кăмăлпа кĕтсе илет?

Кам пире тĕрĕс çырмашкăн,
Вуламашкăн вĕрентет?
Эпир лайăх вĕреннишĕн
Камăн чунĕ хĕпĕртет?

Ушкăн-ушкăн вăйăсенче
Кам пире ертсе пырать?
Юрлама та, ташлама та,
Ĕçлеме те ăс парать?

Урока начар пĕлсессĕн,
Тумасассăн хушнине,
Е урока сиктерсессĕн,
Камăн ырагать чĕре?

3.

Тĕттĕмленет. Хула пин-пин çутăпа йăлтăртатма тытăнать. Урамсенче автомобильсем чупаççĕ. Инçетри вăрман урлă тулли уйăх шăвать.

Ачасем çаплах пăр çинче ярăнаççĕ. Вĕсем патне Петр Михайлович пырса тухрĕ те:

— Пирĕн Владик кунта-и? — тесе ыйтрĕ.

— Кунта! — терĕç иккĕн-виççĕн.

— Эпĕ кунта! — илтĕнчĕ Владик сасси те.

— Ну, ывăлăм, çитĕ. Киле кайăпăр.

— Атте, тепĕр кана ярăнам-ха.

— Çук, çитĕ! Эсĕ тата уроксем те вĕренмен, апат та çимен...

Ашшĕпе ывăлĕ килелле утрĕç.

— Атте, задача çăмăл, тет, сăвви те йывăр мар, теççĕ.

— Çăмăл-и, çăмăл мар-и,— вĕренес пулать. Вĕренмесен — çăмăлли те йывăр пек туйăнать. Манăн та вĕренмелле. Ыран кружок. Доклад тумалла. Атя, вĕренер, ывăлăм!

...Пăр çинче темиçе сехет хушши ярăннипе ывăннă Владик килне аран-аран лăстăртатса çитрĕ. Апат çирĕ те хайхи „çăмăл“ задачăна тума ларчĕ...

— Ахалех çăмăл теççĕ, пĕрре те çăмăл мар,— мăкăртатать вăл халĕ, такама тарăхса. Хăй анаслать, куçĕсем хупăнаççĕ.

Диван çинче кăвак кушак мăрăлтатса выртать. Ăна ăшă та çемçе. Владик ăмсанса пăхать ун çине. Акă ăçта иккен канлĕх: ăна никам та задача шутлаттармасть, выляса çӳренĕ те — халĕ çывăра парать.

Чертёжсем туса ларакан ашшĕ хăйĕн ывăлĕ çине пăхать.

— Эсĕ, ачам, ывăнса çитнĕ курăнать. Пăр çинче сахалтарах ярăнмаллаччĕ,— тет вăл.

— Эпĕ хам чупнă-и-мĕн, мана Миçуксем: „çăмăл задача“, терĕç те ăш киленичченярăнас, терĕм.

— Эсĕ Миçуксене ан пăх, хăвна пĕл.

Унтан ашшĕ задачăна ăнлантарчĕ, ыйтусем пачĕ.

— Ăнлантăм, ăнлантăм!— хĕпĕртерĕ ывăлĕ.

— Ăнлантăн пулсан — хăвах ту.

Хайхи задача чăнах та лайăх пулса пычĕ, вĕçне çитнĕччĕ. Тупсăмĕ те чĕлхе вĕçĕнчехчĕ. Анчах Владик алли „105“ вырăнне темле „106“ çырса хунă. Вăл

„106“ хуратрĕ, „107“ çырса хучĕ. Ачан алли пăхăнмасть пулмалла—нимĕнле те „105“ тухмасть. Владик ывăннăскер, тем пек тарăхса кайрĕ, хыçкаланма пуçларĕ, аллине хĕве чиксе ячĕ, кĕпе тӳмине татса пăрахрĕ, унтан аптранипе кăранташне тытрĕ те шарт хуçрĕ.

— Кăранташ айăплă мар, ывăлăм,— терĕ ашшĕ.

— Ма тата тухмасть çак усал задача?..

Петр Михайлович икĕ татăк кăранташа шĕвĕртрĕ-шĕвĕртрĕ, анчах кăранташсем кашни хутрах шалтан катăлса тухаççĕ. Владик хуçнă чухне кăранташ авăннă та варри шалта татăкăн-татăкăн вакланса пĕтнĕ иккен.

— Санăн кăранташу, ывăлăм, çĕр те пилĕк хуçăк пулнă пулмалла. Шĕвĕртсе çитерме те çук...— текелерĕ ашшĕ, хуллен кулкаласа.

— Ана çав кирлĕ,— терĕ Владик.

— Айăпĕ кăранташра мар, хăвăнтах... Эсĕ задачăна тума тĕрĕс тунă. Анчах „105“ вырăнне ăнсăртран „106“ çырса лартнă. Ывăннипе пулнă пулĕ ку...— вĕрентсе каларĕ ашшĕ.

Çакăн хыççăн Владика ашшĕ çĕнĕ кăранташ шĕвĕртсе пачĕ.

— Ме, ку ун пек кăранташ мар, ăслă ача аллине лексен, задачăсене часах тăвать.

Чăнах та, Владик нумаях та шухăшламарĕ—задача ответне çырса та хучĕ.

— Тухрĕ, тухрĕ, задача тухрĕ!— савăнса кăшкăрчĕ вăл.

Иккĕмĕш задачи чăнах та „çăмăлран та çăмăл“ иккен. Владик пуç çĕмĕрмесĕрех турĕ ăна. Задачăсене шутласан, вăл сăввине те вĕренсе хучĕ.

— ...Камăн ыратать чĕре?— тесе вуларĕ Владик юлашкинчен.

— Ашшӗпе амӑшӗн тата учителӗн,— хуравларӗ ашшӗ.

Çак вӑхӑтра Владик амӑшӗ килсе кӗчӗ. Вӑл каçхи вӑтам шкулта вӗренет иккен.

— Мӗн пирки эсир ку таранчченех ларатӑр? Вунпӗр сехет çитет, эсӗ, ашшӗ, ачана çаплах çывӑрттармастӑн,— терӗ Мария Николаевна, пӗрре ывӑлӗ çине, тепре Владик ашшӗ çине пӑхса илсе.

— Ну, çывӑрма вырт, Владик, ыран, шкултан килсен, эпӗ сана пӗр юмах каласа парӑп.

— Вӑрçӑра мӗн пулни çинчен-и?

— Ун çинчен мар, ывӑлӑм.

— Апла-тӑк, ӗлӗк мӗнле чухӑн пурӑнни çинчен кала.

Ашшӗпе амӑшӗ, иккӗшӗ те, кулса ячӗç. Çав вӑхӑтрах:

„Атте мана кӑранташ хуçнӑшӑн ятламӗ-ши?“ тенӗ шухӑш пырса кӗчӗ ачин пуçне. Анчах вӑл нумаях шухӑшламарӗ: пуçне минтер çине хурсанах, шуçтупанӗпе ярӑнса пынӑ пек туйӑнса кайрӗ, унтан мамӑк пек çемçе юр çине ӳкнӗ пек туйӑнчӗ. Эй, аван-çке тутлӑ ыйхӑ килнӗ чух!..

— Ыйху канлӗ пултӑр!— тенине те илтмерӗ Владик, мӑштах çывӑрса кайрӗ.

4.

Паян — шӑматкун. Владик шкултан килчӗ те каллех выляма каймашкӑн шут тытрӗ. Анчах вӑл, хӑйӗн ӗнерхи айӑпне астуса, халӗ ашшӗ-амӑшӗнчен ыйтмасӑр каяс мар, терӗ.

— Атте, выляма хӑçан каяс?—ыйтрӗ вӑл ашшӗнчен.

Ашшӗ Владик çине ӑшшӑн пӑхса илчӗ. Унтан вӑл яланхи пекех лӑпкӑн:

— Эсё, ывăлăм, тин çеç шкултан килтĕн-ха. Апат çи те кăшт кан. Унтан тула тухса çӳре. Пĕрик сехетрен каялла кил,— терĕ ачине.

Владик апат çирĕ те амăшĕнчен ыйтрĕ:

— Каяс-и?

— Кайса кил ара. Açу тĕрĕс калать. Эпĕ те çавнах каласшăн. Пĕр-ик сехетрен таврăн.

Владик хальхинче чăнах та ашшĕпе амăшĕ каланă пек турĕ. Вăл пăр çинче те ярăнчĕ, килхушшинче те темскер тасаткаларĕ; тĕттĕмленсе çитиччен уроксем те хатĕрлерĕ.

Халĕ ĕнтĕ Владик пур ĕçсенчен те пушаннă. Ашшĕ те çавах.

— Кала!— терĕ вăл ашшĕне.

— Мĕн?

— Хайхи юмаха.

— Тĕрĕссипе калас-тăк, юмах мар, чăн пулни.

— Ĕлĕк мĕнле начар пурăнни çинчен-и?

— Çавăн çинчен... Ну, итле эппин, ывăлăм!

Ашшĕпе ывăлĕ диван çине пырса ларчĕç. Мария Николаевна чăлха çыхма тытăнчĕ. Мăр-мăр кушакки çăмхапа выляма пуçларĕ.

Петр Михайлович акă мĕн каласа кăтартрĕ:

„Сакăр çулта чухне эпĕ шкула кайрăм. Пĕр çул вĕренсен, çулла, анне мана чĕнсе илчĕ те:

— Петĕр, пуян Мисунсен ыран ĕне черечĕ пăхмалла. Вĕсене черет пăхса паратăн пулĕ, ачам? Кăранташ туянмалăх та пулин укçа ĕçлесе ил,— терĕ.

Тепĕр кунне мана анне илĕм-тилĕмпех тăратрĕ. Çăл валашки патне чупса тухрăм та сивĕ шывпа пит çурăм. Куç-пуç уçăлчĕ. Ыйхă таçта кайса кĕчĕ. Унччен те пулмарĕ — урамра ĕнесем мĕкĕрме пуçларĕç. „Ма, ма тухмастăн, ачам!“ тенĕ пекех туйăнчĕ мана.

Анне ман валли çимĕç хатĕрлерĕ: тăпăрчă хутаççине çăкăр сăмси касса хучĕ, виçĕ кăк сухан, икĕ хăяр чикрĕ. Кĕленчене уйран ярса лартрĕ. Эпĕ çав хутаççа илтĕм те, вăрăм пушă йăтса, урама васкаса тухрăм. Хĕрарăмсем ĕне кĕтĕвĕ хăвалаççĕ.

Урамра Мисун арăмĕ аллисене саппунĕ айне чикнĕ те çынсемпе калаçса тăрать. Çавăнтах манпа тантăш Карачăм та пур. Вăл инке сăмахĕсене итлет:

— Пирĕн тăватă ĕне. Астăвăр, эсир тăватă ĕнешĕн касу пăхатăр. Лайăх пăхсан, аллă икшер пус паратăп; пăхаймасан, ĕнесене тырă çине тартса тыттарсан, хăвăрах тӳлесе илĕр.

— Тăрăшăпăр, пĕр ĕнине те тартмăпăр.

Эпĕ вăрăм пушша шартлаттарса çапрăм. Карачăм та хăйĕн пушшине шартлаттарчĕ. Иксемĕр те хĕпĕртесе малалла утрăмăр.

— Кăсем пултараççĕ,— тесе ырларĕ пире анне.

— Пултармасăр...— терĕ Карачăм амăшĕ те.

Çапла вара эпир, вăрăм пушăсене хулпуççи çине çакса, пусăва тухса кайрăмăр. Хушăран пушăсене çавăрса çапатпăр та пушă вĕçĕнчи сӳс татăлса сывлăшра мамăк пек вĕçет. Пушă сасси таçтах илтĕнет. Ялта йытăсем вĕреççĕ, хурсем какалаççĕ...

Шăрăхланиччен ĕнесем лăпкăнах çӳрерĕç. Кăнтăрла, шăна-пăван сĕрлеме тытăнсан, тăватă ĕне хӳрисене пăшал пек тăратрĕç те çаран еннелле пĕрхĕнчĕç кăна. Вĕсем хыççăн ыттисем те чупма пуçларĕç.

— Пуян Мисун ĕнисем, мăнтăрскерсем, тараççĕ,— кăшкăрса ячĕ Карачăм.

— Эпĕ вĕсене тавăрма каям, эсĕ кунта юл,— васкаса чупрăм эпĕ улăхалла.

— Хуралçă аллине ан л-е-е-к!..— кăшкăрчĕ ман хыççăн Карачăм.

Мисун ĕнисем çаран çине çитсе кĕчĕç. Хăвалатăп — татах шалалла чупаççĕ. Çитсе пӳлетĕп—тăваттăн тăватă еннелле пĕрхĕнеççĕ. Улăх варринех çитрĕç. Çак вăхăтра улăх хуралçин, уксах Раманăн, сасси илтĕнсе кайрĕ:

— Аçа çаптăр сана, ачам! Касăва çавăн пек пăхаççĕ-и вара?

Хăранипе манăн çӳç-пуç вирелле тăчĕ. Ним калама та пĕлместĕп.

— Тараççĕ-çке...

— Тараççĕ парам ак сана!.. Кам ачи эс?..

— Михал Симунч ачи.

— Ĕнисем камăн?

— Пуян Мисунăн. Черетне те вĕсемшĕн пăхатпăр... Карачăмпа иксĕмĕр...

— Эккей, ачам, санăн пушă çĕклеме вăю çитеймест, касу пăхма кĕрĕшетĕн. Аçуна хĕрхенетĕп, ачам, вăл чухăн çын... Чухăн пулмасан — çаран таптатнăшăн тăватă купа таранах утă тӳлеттереттĕм. Çитменнине тата Мисунĕ те усал этем. Ачам, сыхланас пулать ун пек этемсенчен, тем те тăвĕç вĕсем.

Раман пиччепе пĕрле эпĕ ĕнесене кĕтĕве хăваласа çитертĕм. Унтан вара Карачăмпа иксĕмĕр ĕне кĕтĕвне пĕве хĕррине илсе кайрăмăр, тапăра хупрăмăр“.

5.

— Ашшĕ!— хутшăнчĕ Владик амăшĕ калаçăва.

— Мĕн?

— Ытла нумай калатăн, Владик ывăнса та çитрĕ пулĕ.

— Çук, çук, ывăнман! Ывăнман! Малалла кала, атте, малалла!..

— Ну, эппин тепĕртак калам.

„...Хайхи ĕнесем пурте тенĕ пекех шыва кĕрсе

тăчĕç. Ĕнесен çурăмĕсем çинче шăна-пăван явăнать. Хурт çăвăр янă пек. Ĕнесем пуçĕсене кăрт-карт силлеççĕ. Хŭрисемпе çапса илеççĕ.

Кĕтĕве тапăра антарсан, эпир çерем çине тăсăлса выртрăмăр. Апат çиме тытăнтăмăр. Карачăм пиçнĕ паранкă чиксе килнĕ. Унăн çăкăрĕ те манăннинчен ытларах, анчах хăярпа сухан çук. Калаçса тăмарăмăр, мĕн пуррине курăк çине кăларса хутăмăр. Кăнтăрла та, каçкŭлĕмпе те апат пĕрле çирĕмĕр.

— Ну, мĕн тăвĕ-ши пире Мисун арăмĕ?— тетĕп эпĕ.

— Хуралçă ĕнесене тытмарĕ-çке.

— Тытма тытмарĕ те... Çапах та...

...Каçхине, ĕне кĕтĕвне яла кĕртсен, Мисун арăмĕ пире хирĕç тухрĕ. Сиввĕн те мăнкăмăллăн калаçать:

— Пăхаймарăр!..

— Мĕнле пăхаймарăмăр?— тетпĕр эпир.

— Ха, хирĕç калаççĕ тата...

— Тĕрĕсне калатпăр, ĕнесене пурне те яла кĕртрĕмĕр.

— Паян пăхаймарăр, çавăнпа та сирĕн тепĕр черет пăхмалла пулать,— тесе хучĕ Мисун арăмĕ юлашкинчен.

Çакăн пек татăлчĕ пирĕн ĕмĕт.

...Тепĕр икĕ эрнерен эпир, Карачăмпа иксĕмĕр, каллех касу пăхма кайрăмăр. Вăл кун çанталăк сулхăнрахчĕ те, ĕнесем тармарĕç. Çапах та Мисун арăмĕ укçине малтан килĕшнĕ чухлĕ памарĕ.

— Иртнĕ черетре эсир ĕнесене тартнă, çаран çинчен хăваласа тухнă чухне пирĕн ĕнесене хытă хĕненĕ. Çавăнпа та вăтăр пилĕк пус çеç паратăп,— терĕ".

„Вăтăр пилĕк пус" тенине Владик ăнланмарĕ:— 15 пус ŭстерсе пачĕ-и?— тесе ыйтрĕ ашшĕнчен.

— Çук, ўстермен, вăл 15 пус вырăнне 10 пус çеç пачĕ. „Вăтăр пилĕк пус“ — вăл ĕлĕкхи укçа шучĕ. Ĕлĕк чăвашсем укçана хальхи пек шутламан,— терĕ ашшĕ. Вĕсем 1 пуса—3 пус, 2 пуса—7 пус, 3 пуса—10 пус, 5 пуса—17 пус, 10 пуса—35 пус, 15 пуса—52 пус, 20 пуса—çитмĕл пус, 30 пуса — сум та пилĕк пус, 40 пуса—140 пус, 60 пуса— иксум вунă пус тенĕ.

Укçа парсан çапах та эпир хĕпĕртерĕмĕр. Вăтăр пилĕкшер (10-шар) пус ĕçлесе илни — пĕчĕк ĕç мар-çке!

— Эсĕ мĕн илетĕн? — ыйтать Карачăм.

— Кăранташ илес тетĕп.

— Эпĕ „Чăваш халлапĕсем“ ятлă кĕнеке илесшĕн. Унта „Нарспи“ ятлă юмах пур. Эпĕ ăна аннене вуласа парасшăн...

— Ил-ха, эпĕ те аннене вуласа парăп.

6.

— Кăранташне илтĕн-и, атте? — ыйтрĕ Владик.

— Илмесĕр, илтĕм...

Ашшĕ кăштах чарăнса тăчĕ те татăлнă халапа малалла калама тытăнчĕ.

„...Тепĕр кунне эпĕ кăранташ илме лавккана кайрăм. Лавкки çав мисунсенехчĕ. Хăра-хăра кĕтĕм. Мисун ывăлĕ кĕлентĕр çисе тăрать.

— Миккантăр пичче, кăранташ пур-и? — ыйтрăм эпĕ.

Миккантăр кăранташ пуррипе çуккине каламарĕ. Вăл шурă куçĕпе ман çине чăр-р-р пăхрĕ те:

— Укçу пур-и? — терĕ.

— Пур.

— Мĕн чухлĕ?

— Вăтăр пилĕк пус.

— Кӳр эппин укçуна.

Миккантăр сăмахĕсем мана: „Ку пирĕн укçа! Манăн ăна каялла илмелле. Вăл санăн аллунта пĕр кун та ан пултăр“, тенĕ пек туйăнчĕç.

Хайхискер пĕр кăранташ илчĕ те мана тыттарчĕ:

— Ме!

Эпĕ пĕрре савăнса кайрăм, тепре хурланса илтĕм. Савăнтăм! „Халĕ ĕнтĕ манăн та кăранташ пур. Вĕрен кăна, çыр кăна... Эпĕ ăна кĕркуннеччен пуçламăп, шĕвĕртсе кĕскетмĕп...“ терĕм. Хурлантăм! „Эпĕ икĕ кун черет пăхрăм, çапах та аран-аран пĕр кăранташ илмелĕх укçа тупрăм... Укçа чул кастарать тени тĕрĕс пулĕ çав“.

Эпĕ лавккаран тухсанах Мисун ывăлĕ темшĕн лах-лах-лах кулса ячĕ. „Ĕне черечĕ пăхнă чухне таракан ĕнесем хыççăн макăрса чупрăм, улăхри лачакана путса лартăм. Миккантăр пичче çавна курнă та, çавăнпа кулать пулĕ“,— шухăшларăм эпĕ.

Кăранташ туяннишĕн эпĕ, çапах та, пĕтĕм чунчĕререн хĕпĕртерĕм. Çул çинче темиçе хут чарăнса тăтăм, кăранташа çавăра-çавăра пăхрăм, шăршласа илтĕм, вĕçне чĕлхепе тĕксе пăхрăм. Кăранташ вĕçĕ тимĕр пек сивĕ. Унăн вĕçĕ сивĕ пулсан, кăранташ лайăх, теççĕ ачасем. „Ку кăранташа аттене кăтартасчĕ. Атте курсан, тĕлĕнсех кайĕ... Савăнĕ...“ тесе пыратăп.

Киле çитнине те сисмерĕм. Килте никам та çук. Атте вăрман касма кайнăччĕ. Вăл икĕ эрнерен çеç килмеллеччĕ. Çавăнпа та эпĕ çак кăранташа аттене çийĕнчех кăтартаймарăм.

Вăрмантан килсен, пĕр виçĕ кунтан, атте мана чĕнсе илчĕ те:

— Петĕр, санăн çав укçа пурăнать-и?—тесе ыйтрĕ.

— Кăранташ илтĕм,— савăнса пĕлтертĕм эпĕ.
— Миçе?
— Пĕрре.
— Ма пĕрре çеç?
— Мисун Миккантăрĕ пĕрре çеç пачĕ...
— Эх!— терĕ те атте тытăнчĕ мана ăнлантарма. Сĕтел хушшине лартса ятларĕ.

Эпĕ тинех ăнлантăм. Миккантăр мана, тăхăр çулхи ачана, улталанă иккен. Икĕ кун выльăх кĕтсе илнĕ укçа пилĕк кăранташ илме çитнĕ-мĕн. Анчах мана усламçă пĕр кăранташ çеç пачĕ. Çавăнпа ĕнтĕ лавккаран тухсанах çав ирсĕр этем, намăса пĕлмен ултавçă, лахлатса кулнă-мĕн. Çакна аса илсен, эпĕ тарăхса кайрăм, ăш кýтсе çитрĕ, чун тăвăлса килчĕ... „Мĕнле вăл, пысăкскер, мана, пĕчĕк ачана, улталама хăйнă? Эпĕ ăна мĕн усал тунă? Вĕсем çынсене улталаса пуяççĕ иккен!..“ тесе хутăм юлашкинчен.

— Халĕ ăçта пурăнаççĕ вĕсем? — ыйтрĕ Владик ашшĕнчен.
— Камсем?
— Мисунсем.
— Халĕ ялта вĕсен шăрши те çук. Октябрьти революци мисунсем пек харампырсене тĕп турĕ.
— Харампырсене тĕп туни кĕнекере те пур... Эпĕ ун çинчен вуланă...—терĕ ывăлĕ.

7.

Кăранташ халапне Владик шкулта урок итленĕ пекех итлерĕ. Вăл халап ăна тарăн шухăша ячĕ: „Кăранташ пĕчĕк япала. Анчах пĕчĕк япала та ахаль килмест. Ăна аттепе анне ĕçлесе илнĕ укçапа туяннă. Вĕсем маншăн та тăрăшнă. Эпĕ, хам айван пирки,

çав кăранташа тытрăм та хуçрăм. Атте-аннене хисеплеменни пулчĕ ку. Юрамасть ун пек хăтланма. Учитель те атте-аннене хисеплеме хушать". Владик çакăн пек шухăшларĕ те ашшĕ патне пычĕ, ăна хăлхинчен хуллен каларĕ:

— Атте, каçаратăн-и эсĕ мана кăранташ хуçнăшăн?

— Кăранташ хуçнине эпĕ манса та кайнă. Эсĕ, ывăлăм, манман иккен. Каçаратăп, каçаратăп, анчах эсĕ урăх ун пек тумăн-и?

— Юрĕ, атте, эпĕ нихçан та ун пек тумăп.

...Ашшĕпе ывăлĕ, тен, малалла тата та калаçатчĕç пулĕ. Анчах телефон шăнкăртатрĕ те Петр Михайлович телефон патне кайрĕ.

— А, Тюкалов юлташ! Директор чĕнет, тетĕн? Халех пыратăп, халех...

Владик кăранташ пирки амăшĕпе те калаçрĕ.

— Мана аттерен намăс, санран та намăс,—терĕ ывăлĕ.

— Ну, ўлĕм ун пек тумăн-çке, вĕренме те лайăх вĕренĕн,— лăплантарчĕ амăшĕ.

— Манăн икĕ „тăваттă" пур çав, анне. Çав икĕ „тăваттăна" пĕтерсен, пуринпе те „пиллĕк" пулĕ.

— Çапла, пуринпе те „пиллĕк" пултăр.

1953.

ТЁЛЁНМЕЛЛЕ ВИНТОВКА

1.

Пёрре, хёллехи ăшă кун, Волхов фронтёнче чухне, манăн Рушиново ялĕн çулĕпе вăрман витĕр каймалла пулчĕ. Вăрманти çул тăватă еннелле кайнă çĕре çитрĕм те пĕр салтака тĕл пултăм. Ниçталла кайма пĕлмен пирки вăл иртен-çŭренсене кĕтсе тăрать-мĕн. Эпĕ унпа танлашрăм, ун çине асăрхаса пăхма тытăнтăм. Лутрарах çын вăл. Пичĕ сарлака, сăнĕ тĕксĕм, пит шăммисем кăштах мăкăрăлса тухса тăраççĕ. Эпĕ „ку е чăваш, е тутар“ тесе шухăшларăм.

— Командир юлташ,—терĕ вăл вырăсла, тытăнчăклăрах тухакан сассипе,—манăн Н-ски полка каймалла. Эсир мана çул кăтартса памăр-ши?

„Ку çын чăваш пулмалла, е тутар?..“ шухăшларăм каллех: сăмахсене вырăсла тĕрĕсех çавăрса калаймасть вăл.

— Кăтартса парасса парăп та... анчах эсĕ кам пултăн-ха?

— Эпĕ—рядовой Терентьев.

„Терентьев“—тесен, эпĕ иккĕленмесĕрех:

— Эсĕ чăваш пулас?—тесе ыйтрăм малтанлăха вырăсла.

— Чăваш,—пĕлтерчĕ Терентьев, тутарларах акцентпа.

Эпир иксĕмĕр те тăван чĕлхепе калаçма тытăнтăмăр. Терентьев, Никифор Антонович, хĕрĕх çулта. Вăл пушкăрт хушшинчи чăваш ялĕнче çуралса ўснĕ. Унăн чĕлхинче чăвашла, пушкăртла сăмахсем пĕрлешсе кайнă. Çавăнпа та вăл пирĕн пек мар, кăшт урăхларах калаçать.

Эпĕ хам та Н-ски полка каятăп та... çула май, çакăнтан тытăнса, иккĕн пĕрле утрăмăр. Манăн юлташ пулчĕ вăл. Вăрман çулĕ çинче эпир иксĕмĕрех пултăмăр.

Пирĕн умра хĕллехи яка çул тўп-тўррĕн курăнса выртать. Йĕри-тавра чăрăш вăрманĕ. Çил çук. Хĕл хĕллекен кайăк-кĕшĕксем, кăсăясемпе уйăпсем тата темĕнле ытти кайăксем, турат çинчен турат çине сиксе, хăйсен çепĕç чĕлхипе чĕвĕлтетеççĕ. Пирĕн сасса илтсен, кăштах хăраççĕ те ĕлĕк ял пулнă вырăна, уçланкă урлă, пĕрин хыççăн тепри вĕçеççĕ.

Çапла, пĕрле утнă май, рядовой Терентьев мана хăй пурнăçĕ çинчен каласа, хăй вăрçа мĕнле килни çинчен пĕлтерчĕ. Юлашкинчен:

— Сире тата тепĕр истори каласа парам-ха,— терĕ вăл, тем çинчен аса илсе.—Ку ĕç 1919-мĕш çулта пулса иртрĕ...

Никифор Антонович каласа панă „историе“ эпĕ, хамăр землянкăна тавраннăсанах, васкаса хут çине çырса хутăм, асăнмалăх юлтăр, терĕм.

„Çип ăçтан çинçе, çавăнтан татăлать“, тенĕ ĕлĕк ваттисем. Çинçе çип пекех пулнă Терентьев пурнăçĕ те. Çамрăк Микихвер тăлăха юлнă. Кăшт çитĕнсен вара, шăпах граждан вăрçи вăхăтĕнче, Урал ятлă пысăк ялта кĕтӳ пăхма кĕрĕшнĕ.

Пĕррехинче, çуркунне, ăшă та илемлĕ кун, Микихверĕн кĕтĕвĕнчи сурăх-такасем курăк çисе тăраннă та вăрман хĕрринче лăпкăн канса выртнă. Микихвер те юман каска çине канма ларнă. Çамрăк ача вут-шанкă пухса хунă, кĕл çинче паранкă пĕçернĕ...

Çав вăхăтра ĕнтĕ кĕтӳçĕ ик юланута курах каять. Сиккипе чуптарса пыраççĕ вĕсем Микихвер патнелле. Иккĕшĕ те çамрăк, маттур йĕкĕтсем. Пĕри пăшалпа, тепри—хĕçпе. Сумкăсем пур хăйсен. Сумкисенче туллиех граната.

— Çамрăк тус!—тет пĕри йăсăрланса выртакан вучах патне çитсенех.—Эсĕ кам пулатăн?

— Эпĕ—кĕтӳçĕ, Антун чăваш ачи—Микихвер, чухăн çын...

— Ну, эппин эсĕ—пирĕн тус. Анчах эпир камне пĕлетĕн-и?—ыйтать хайхискер каллех.

— Пĕлетĕп.

— Ну, кала—камсем?

— Хĕрлисем.

— Мĕнле пĕлтĕн?

— Çăлтăртан палларăм. Пĕлетĕп, эсир хĕрлисемех... Эпĕ те хĕрли...

— Вот што?—кулса тĕлĕнет ут çинчи йĕкĕт.

— Ну, эппин, шуррисем ăçтине пĕлетĕн-и?

— Пĕлетĕп.

Кун хыççăн икĕ каччă хăйсен урхамахĕсем çинчен ялт сиксе анаççĕ те нумайччен Микихверпе лараççĕ, тăвансем пек калаçаççĕ. Шуррисем ăçтине тĕпĕ-йĕрĕпе ыйтса пĕлеççĕ. Вĕри кĕл çинче кĕрпекленсе пиçнĕ паранкăпа хăналать вĕсене çамрăк кĕтӳçĕ.

— Пăшална кăтарт-ха!—ыйтать Микихвер пĕринчен.—Çитĕнсен сирĕн пата, шуррисене хĕнеме, пыратăп.

— Эсĕ çитĕнсе çитнĕ çĕре шуррисем пулмаççĕ. Эпир вĕсене часах ак тĕп тăватпăр,—ăнлантарать Микихвере хĕрлĕ салтак. Унтан вăл хăйĕн винтовкине кăтартма тытăнать.—Хитре вĕт!—тет хăй.

— Хитре!—тĕлĕнет çамрăк кĕтӳçĕ.

Антун ывăлĕ вĕсен пăшалне тытсах пăхать, хĕвелпе кушăркаса кайнă аллисемпе шăлса ачашлать. Пăшал кĕпçине хăйĕн çивĕч куçĕсемпе виçсе:

— Çитĕнсе çитсен,—тет вăл,—эпĕ те сирĕн пек тумтир тăхăнатăп, хĕрлĕ салтак пулăп...

Пăшал вулли çинчи картсене курать те уй-хир ачи, пулас салтак, вĕсене уйрăммăн-уйрăммăн шутласа, тĕлĕне-тĕлĕне ыйтать:

— Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр, тăххăр. Ку картсене мĕншĕн тунă? Мĕн паллисем вĕсем?

— Тепĕр белогвардееца вĕлерсен, вунă карт пулать,—ăнлантарать ачана пăшал хуçи.

— Вунпĕр вĕлерсен?

— Вунпĕр карт пулать.

— Апла-тăк ăнлантăм, ăнлантăм... Эпĕ те çавăн пек тăвăп. Шуррисене вĕлерĕп—пăшал вулли çине картсем картăп...

Çаксем вара Микихвере, асăнмалăх тесе, вĕрçĕнĕ шлем парса хăвараççĕ. Кĕтӳçĕ шлема çав тери

савăнса, хĕпĕртесе илет. Ăна ку вăхăтчен никам та çавнашкал парне паман вĕт-ха, никам та çын вырăнне хурса хавхалантарман. Халĕ кусем, ăна малтанхи хут çеç курнă пулин те, хĕрлĕ çăлтăрлă шлем парса хăвараççĕ. „Лайăх çынсем, пăхсах паллă, пирĕн çынсем“,—тенĕ шухăш вĕçленет Микихвер пуçĕнче. Çапла, лайăх çынсем вĕсем! Анчах вĕсен вăхăт çук. Çавăнпа та юланутçăсем лашисене çавăраççĕ те каялла, вăрман витĕр, çил пек вĕçтереççĕ. Вĕсем хыççăн типĕ çулçăсем çеç вĕçсе юлаççĕ...

Çав икĕ йĕкĕт Чапаев отрядĕнчен килнĕ. Разведчиксем пулнă вĕсем. Разведчик пăшалĕ тап-таса, хитре... Пулас салтак Никифор Терентьев унăн номерне те шухăшĕпе ăнкарса юлнă. „Виççĕ, виççĕ, пĕрре, унтан çиччĕ“ шутланă вăл. Çак цифрăсене пĕр çĕре хушнă та, вунтăваттă пулса тăнă. „14 мĕш номерлĕ винтовка“ тенĕ Микихвер, анчах винтовкăн чăн-чăн номерне калама пĕлмен. Пине çити шутлама пултарайман вăл, вĕренмен... Анчах çав цифра унăн пуçĕнче, таçта шухăш тĕпĕнче, пытанса юлнă-юлнах...

Юланутçăсем тахçанах вăрман хыçне пытаннă, тахçанах хăйсен юлгашĕсем патне çитнĕ, шуррисем çинчен хăйсен командирне каласа панă.

Хăйне панă хаклă парнешĕн кĕтӳç нумайччен савăннă. Çак çурхи ăшă кун ăна ытла та телейлĕн туйăннă. Йăваш çил ăшшăн вĕрнĕ. Йывăç тăррисем те урăхла хумханнă пек, хĕпĕртесе-савăнса, хулленхуллен юрланă пек туйăннă. Çӳлĕ тӳпери чăлт шурă пĕлĕтсем калама çук илемлĕн курăннă. Пĕрре кăпăкланса шуралса çитĕннĕ вĕсем, тепре, çу пек ирĕлсе, çавăнтах çухалнă. Ку вăхăтчен çĕтĕк-çатăк тумтирпе çӳренĕ Микихверпе пĕрле çак вырăнти уй-хир, вăрман, çырма-çатра, унта юхакан, пухăнса тăракан шыв-шур савăннă, шыв хĕрринче ирĕн-ка-

çăн пăшăлтатса ларакан хăях-хăмăшсем савăнса хумханнă, çӳлĕ йывăçсем çинче вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçсе тăракан сип-симĕс çулçăсем куça ачашланă,—пурте, пурте савăнса хĕпĕртенĕ, пурте хăйсен çеммипе, хăйсен йĕркипе савăннă, çын илтмелле мар сасăпа хуллен-хуллен юрланă, сĕрленĕ... Çавăн пек вăл çут тĕнчен вăрттăн шавĕ, çавăн пек унăн пире ачашлакан кăмăлĕ, чĕрене кĕрсе чун хĕлĕхне пырса тивекен çинçерен те çинçе хĕлхемĕ... Эпир ăна хамăр туйăмсемпе сисетпĕр, вăхăтлăха пурне те манатпăр, таврари илемлĕхе парăнса, çут тĕнчен йăвашлăхне пула ачашшăн савăнса тĕлĕнетпĕр... Çил вăштăр-вăштăр вĕрет-и, хурт-хăмăр сасси, инçетри кайăк юрри илтĕнет-и, пурте, пурте чуна пырса тивет, савăнтарать.

...Рядовой Терентьев хăйĕн ача чухнехи пурнăçĕ çинчен, уйрăмах кĕтӳ пăхнă çĕрте пулнă „истори“ çинчен мана каласа пачĕ те хăйĕн винтовкине хулпуççийĕ çинчен вĕçертсе, унăн номерне кăтартрĕ.

— 3326-мĕш номер. Цифрисене пĕр çĕре хушсан, вунтăваттă пулать. Тĕлĕнмелле винтовка,—терĕ вăл тахçанхи пек, ача чухнехи пек савăнса,—унтан пăртакçă сассине хăпартрĕ те.—Ку винтовкăпа ĕлĕк шуррисене аркатнă, халĕ вăл мана пулăшать, эп унпа нимĕçсене шаккатăп. Вăт, капитан юлташ, мĕнле пăшал ман алăра!—терĕ.

— Тĕлĕнмелле винтовка!—терĕм эпĕ те, салтакпа пĕрлех хавхаланса.

2.

Виç-тăват уйăхран мана пĕррехинче тутар, чăваш салтакĕсем хушшинче калаçу ирттерме хушрĕç. Рота командирĕ патне пытăм та хам мĕн ĕçпе килни çинчен пĕлтертĕм.

— Ун пирки мана штабран паçăрах пĕлтерчĕç. Сире кĕтетĕп. Эпĕ ĕнтĕ тутарсемпе чăвашсене пухрăм. Пĕтĕмпе тăватă çын,—терĕ те командир, капитан Марченко, çав салтаксем патне çул кăтартса ячĕ.

Вĕсем пĕр тарăн лапамра, пĕчĕк хăвасем хушшинче лараççĕ. Эпĕ пырса çитнĕ вăхăтра пĕр салтакĕ винтовкăпа тăрмашатчĕ.

— Чун пек пăшал, тĕлĕнмелле винтовка,—тет вăл, винтовкине çавăркаласа.

„Тĕлĕнмелле винтовка“ тенине илтсен, эпĕ чăваш салтакне Терентьева, Никифор Антоновича, аса илтĕм. Кунта мар-ши вăл?“—шухăшларăм ăшăмра. Мана курсан, салтаксем пурте ура çине хăвăрт тăчĕç те, аллисене тăнлав тĕлне тытса, саламларĕç. Эпĕ те вĕсене сывлăх сунтăм.

— Ларăр!—сăмах хушрăм вырăсла. Унтан винтовка тытнă салтак патне пырса.—Ну, юлташ, кăтарт-ха тĕлĕнмелле винтовкуна,—терĕм.

Эпĕ тăван чĕлхепе калаçнине илтсен, салтаксенчен иккĕшĕ пĕр харăссăн:

— Капитан юлташ, эсир чăваш иккен!—тесе тĕлĕнчĕç.

— Чăваш!—терĕ пĕри. Ку хайхи Терентьев, хĕлле вăрман çулĕ çинче тĕл пулнă салтак, пулчĕ.

— Эпĕ чăвашла тутар,—пĕлтерчĕ Терентьевпа юнашар лараканни. Ятăм-хушаматăм: Ибергенов Юзкей.

Чăвашла тутар хăйĕн юлташĕсем çине пăхрĕ те:

— Кусем пурте тап-таса чăвашсем, ман çывăх туссем!—тесе паллаштарма тытăнчĕ.—Ку—Терентьев, ку—Прокопьев, лешĕ—Владимиров, Урал чăвашĕ, Саратов чăвашĕ, Чăвашри чăваш...

— Терентьев юлташа эпĕ тахçанах пĕлетĕп,—тесе, пурне те алă парса тухрăм.

Паллашнă хыççăн вĕсене фронтсенчи лару-тăрусем çинчен, хамăр çĕршыври пурнăç мĕнле пыни çинчен, тĕрлĕ тĕслĕхсемпе усă курса, тăван чĕлхепе каласа патăм. Юлашкинчен, Терентьев винтовки çине куçрăм, ăна тем пек ырларăм... Чаплă пăшал! Анчах пирĕн халь тата та лайăхрах, çĕнĕ те вăйлăрах пăшалсем нумай: пирĕн çарти хĕçпăшал пĕтĕмпех çĕнĕ йышши хĕçпăшал, çĕнĕ техника, совет çыннисем урăхлатса çĕнетнĕ, пахалатнă техника.

Тăррипе калас-тăк, эпĕ пĕлместĕп: Терентьев юлташ 1919-мĕш çулта чăнахах та çак хăй аллинчи винтовкăна курнă-ши е урăххине-ши?.. Анчах Терентьев чĕререн, чунтан ĕненет. „Çак винтовках“ тет, „урăххи пулма пултараймасть“... тесе ĕненте-рет. Çапах та вăл çав винтовка номерне мар, номерти цифрăсен суммине—вунтăватта çеç лайăх астăвать...

Вăт, пăхăр та курăр, юлташсем!

Хăй винтовки çинчен каланине илтсен, Терентьев сăмах хушмасăр чăтаймарĕ.

— Çак винтовка пулман пулсан,—терĕ вăл,—эпĕ, иптешсем, тахçанах çĕр айĕнче çĕрсе выртнă пулăттăм. Винтовка—хаяр пăшал, вăл—сан тусу, тетчĕ пире командир. Вырăс винтовки пек тĕл, çирĕп перекен пăшал тĕнчере урăх çук, тетчĕ вăл пире. Чăн сăмах ку, эпĕ те çавнах калатăп, иптешсем!

Терентьев кăшт чарăнчĕ те:

— Эсир, капитан юлташ, март уйăхĕнчи çапăçура пулнă пулĕ?—ыйтрĕ вăл манран.

— Пулнă,—терĕм эпĕ.

— Ну, эппин, эсир мана часах ăнланма тивĕç.

Терентьев юлташ хăйĕн винтовки çине пăхса илчĕ. Унтан каллех сăмах хушрĕ:

— Иптешсем, ку винтовкăн номерĕ 3326. Эпĕ

ăна халĕ кăна мар, тĕлĕкре те куратăп, вилсен те манас çук...—терĕ вăл ерипен.

— Ну, сват, мĕншĕнне эсĕ çаплах каламарăн-ха,— хутшăнчĕ Саратов чăвашĕ Владимиров.

— Чăнах та, кала хăвăртрах,—килĕшрĕ унпа Прокопьев.

— Каласам ара!..—терĕ Ибергенов.

— Ну, Терентьев юлташ, кала,—сĕнтĕм эпĕ те.

* *
*

...Инçе те мар авалхи хула—чаплă Новгород. Ун çумĕнче Кирилл монастырĕ. Хулара та, çав монастырьте те фашистсем. Вĕсем кунта 1941 çулта август уйăхĕнче килнĕ те, мурилесшĕсем, пирĕн çĕре чаваласа, арлан пек кĕрсе вырнаçнă, авалхи монастырь стенисем айне çĕр пӳртсем, дзотсем туса тултарнă.

Çуркунне çак вырăнта пысăк çапăçу пуçланса кайрĕ. Çав хаяр çапăçура Терентьев та пулнă. Йывăр вăхăт килсе тухнă та,—шыв тулса ларнă воронкăра иртен пуçласа каçчен выртнă вăл. Чăтма çук шăннă салтак, анчах ăçта каяс: йĕри-тавра фашистсем. Пуçа çĕклесенех — пуля шăхăрать.

Çыран хĕрринче пысăк дзот. Çав дзотран нимĕç пулемĕтчикĕсем пĕр вĕçĕмсĕр вут сирпĕтеççĕ.

Катаран-катаран каç пулса килсен, тĕнчене тĕттĕм чаршав хупласан, нимĕçсем вăрçă хирне выçă кашкăрсем пек тухаççĕ. Вилесене ухтараççĕ, аманнисене вĕлереççĕ, чĕррисемпе çапăçаççĕ.

Терентьев çак картинăна курса, сăнаса выртнă. Вут сирпĕтекен дзотри фашистсем, каç пулса çитсен, çапăçу хирне вăрра тухнă, выçă йĕкехӳре пек сиккелесе, хăра-хăра унта-кунта вăркăнса çӳренĕ. Мародĕрсен кĕтĕвĕ йышлансах пынă.

...Шăнса, ĕнтĕркесе кайнă чăваш салтакĕ Терентьев, темиçе кун хушши куç хупман пулин те, сыхă пулнă, винтовкине аллинчен вĕçертмен.

— Вилсен те винтовкăна алăра тытса вилем!— тенĕ вăл, гитлеровецсем çинелле хаяррăн пăхса.

Инçе те мар—Волховец шывĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе çурхи пăр çĕмĕрĕлнĕ, тупă йĕтрисем пыра-пыра ўкнипе арканса кайнă. Халĕ тата пăр çине шыв тапса тухнă.

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăртатса мар,—васка-васка юхать çурхи шыв. Сарăлсах, тулсах пырать вăл, пуян та тулăх çур шывĕ.

Тăшмансем шыв урлă каçма шут тытнă, хăмасем сĕтĕре-сĕтĕре пырса, пăр татăлса кайнă çĕре каçă хунă. Терентьев çакна курсах выртнă, пăшалĕпе тĕлленĕ. Чăсланка фашист каçă çине кĕнĕ,—Терентьев персенех, çав эсрел шыва персе аннă, унтан тепри каçма тăнă—вăл та татăлса аннă, виççĕмĕшĕ те çавах...—Унтан тăваттăмĕшĕпе пиллĕкмĕшĕ... Вĕсем ĕнтĕ, аманнăскерсем, пăрлă шывра ише-ише шăмпăлтатнă та, юлашкинчен, йытă чĕлхи пек чĕлхепе— „Майн готт“ тесе хăрушшăн кăшкăрса, Волховеца путнă...

— Пĕтсен те тăшмансене вĕлерсе пĕтем,—тесе пенĕ ун чухне хăюллă салтак Никифор Терентьев. Çапла, пуля хыççăн пуля вĕçтерсе, фашистсене шыва чăмтарнă. Унтан вăл хăй сиксе тăнă та, çав шыв урлă тепĕр çĕртен каçса, тăшман пулемётне çырма хĕррине туртса пынă. Монастырьти нимĕçсем ăна курнă, пеме тытăннă. Совет воинĕн аллинчи пăшал—туртса илнĕ нимĕç пулемётчĕ—нимĕçсене хăйсенех çунтарнă, ăшаланă... Анчах персен-персен патронсем пĕтсе çитнĕ. Терентьев вара тăшман пулемётне шыва пăрахнă.

„Сан хуçу шывра,—тенĕ вăл хăй ăшĕнче,—унта пулемĕтсăр вăрçма ăна йывăр пулĕ...“

Чĕмсĕр металл шыва путсан, совет воинĕн чĕри лăпланнă, анчах курайманлăхĕ сирĕлмен. Вăл, вутхĕмĕн çунса, ялкăшса, малаллах чĕннĕ: „пĕр фашист пĕтет—çĕнтерӳ çывхарать, иккĕ пĕтет—çĕнтерӳ тата та çывăхрах пулать... Фашист чĕрĕ юлсан,—вăл ман çĕршыва пусмăрлас шухăша пăрахмĕ. Çавăнпа нимĕç захватчикне вĕлер, тĕп ту!“—тенĕ вăл.

Çапла, чĕрери курайманлăхĕпе хĕмленсе, çапăçнă Никифор Терентьев.

Тăрсан-тăрсан, инçетри хуласемпе ялсем хыçĕнчен, сĕм вăрмансем урлă, çурхи кăвак тĕтресене ылтăн пайăркисемпе майĕпен çутатса, никамшăн та ăшшине хĕрхенмен вут хĕвел, капмаррăн çĕкленсе, саркаланса тухнă.

— Тусăм, чунăм!..—тесе пăхнă паттăр салтак хăйĕн пăшалĕ çине. Винтовка номерне ирхи хĕвел çутинче курсан, вăл хăйĕн тусне вуникĕ хутчен тытса чуптунă.

* * *

...Терентьев хăйĕн сăмахне пĕтерчĕ те винтовка вулли çинчи картсене кăтартма тытăнчĕ.

— Пĕрре, иккĕ...—шутларĕ вăл.

Çирĕм çичче çитрĕ карт шучĕ.

— Кашни карт пĕр фашист вилĕмне пĕлтерет. Вунтăваттăшне ĕлĕкех картнă. Вĕсене çав 1919-мĕш çулта мана шлем парса хăварнă разведчиксем картнă пуль, тетĕп. Вĕсен картне кура эпĕ те картма тытăнтăм... Вунвиçĕ карт касрăм.

Вăрман хĕрринче, землянкăсем хушшинче, шăхличĕ сасси илтĕнсе кайрĕ. Ку шăхличĕ салтаксене

каçхи вĕренĕве чĕнчĕ-мĕн: калаçура пулнă салтаксем тумланчĕç те, вĕренĕве кайма тесе, ытти юлташĕсемпе пĕрле пĕр çĕре, çӳлĕ чăрăшсем айне, ротипех пухăнчĕç.

Тĕтреленсе, тĕттĕмленсе фронтри каç çывхарчĕ. Пĕтĕм çырана пин-пин шăрчăк сырса илчĕ. Вĕсен пĕр кĕвĕллĕ, пĕр майлă юрри йăлăхтарать.

Чăтлăх вăрман витĕр эпĕ хамăр землянкăсем патне таврăнтăм. „Пурте Терентьев пек çапăçсан— вăрçă миçе куна пырĕ-ши?“—ыйтрăм эпĕ çавăн чух хамран хам.

Çав Никифор Терентьев пек хастар совет салтакĕсем асăмран халĕ те каймаççĕ. Яланах, иртнĕ кунсем çинчен шухăшласан, эпĕ çав паттăрсене аса илетĕп. Ун чухне вара совет патриочĕсен паха ĕçĕсем каллех ман умма тухса тăраççĕ, каллех—ылтăнăн, кĕмĕлĕн ялкăшса курăнаççĕ, çав паттăр салтаксем малаллах, малаллах утаççĕ.

1944—1945.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР

ТУПМАЛЛИ

Стр.

Килхушшинче 3
Пирён çывăх юлташ . . . 10
Ытарайми тёлёк 16
Кăранташ халапё 24
Тёлёнмелле винтовка . . 41

Редактор *И. Никифоров*. Тех. ред. *Г. Петров*.
Худ. редактор *М. Силкина*.
Корректор *М. Алексеев*.

НТ 09376. Подписано в печать 12-X-1953 г.
Объем 3,5 печ. л., 2,29 уч.-изд. лис.
Бумага 60×84 1/16. Тираж 3000 экз. Заказ № 2013.
Цена 45 коп.

Типография № 1 Министерства культуры
Чувашской АССР.

Гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

O. T. K. 8

Цена 45 коп.

В. ДОЛГОВ

НАШ БЛИЗКИЙ ТОВАРИЩ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1953